*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

92 (2504) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи апрелĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЭРНЕКУН

2014,
ноябрь/чӳк, 28

## ПУРНĂÇ ТАППИ

### Ĕç пур!

**Украинăран тарса килнисем валли те ĕç яланах пур.**

Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин порталĕнче республикăри граждансене, çавăн пекех Украинăран тарса килнисене яланлăхах ĕçе вырнаçтарма вакансисен списокне вырнаçтарнă. Ноябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне унта 1757 рабочи вырăнĕ пуррине тата республикăри 142 организаци ыйтнипе 153 тĕрлĕ профессипе тата специальноçпа рабочипе служащи кирлине пĕлтернĕ. Пурăнмалли вырăнпа тивĕçтерме хирĕç маррисем те пур.

Списокра ытларах Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш хулисенчи предприятисене кирлĕ рабочи специальноçĕсем: çĕвĕç (457 вырăн), тĕрлĕ специализациллĕ слесарь (214), автомобиль, автобус тата троллейбус водителĕсем (74). Рабочисем тĕпрен илсен республикăри районти предприятисенче кирлĕ (72), Шупашкарти «Яхтинг» пĕрлешӳре атă-пушмак тăвакансене (70) кĕтеççĕ. Шупашкарпа Канаш предприятийĕсенче электромонтерсем валли 59 вырăн пур. Стройкăсенче арматурщиксем, каменщиксем, бетонщиксем, рабочисем çитмеççĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби хальхи вăхăтра тĕрлĕ квалификациллĕ врачсем кирлине пĕлтерет. Улатăрти, Канашри, Çĕмĕрлери сиплев учрежденийĕсенче 69 вырăн пушă. Пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕ, гинеколог, стоматолог, хирург тата ыттисем кирлĕ. Канашпа Улатăрта вĕсене пурăнмаллипе те тивĕçтернĕ пулĕччĕç. Хуласенчи предприятисенче паянах 23 инженера ĕçе илме хатĕр. Канашпа Шупашкарта страхлав агенчĕсем çитмеççĕ. Кĕтӳçĕпе кредит инспекторĕн вырăнĕ те пур.

## КĔСКЕН

**Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра майракаллă шултра выльăх шучĕ пĕлтĕрхинчен 0,3 процент пысăкланса 205 пин пуçа çитнĕ, сысна йышĕ 10,7 процент чакса 190 пин пуç юлнă, сурăхпа качака 3,3 процент сахалланнă – 170 пин пуç юлнă.**

**Ял хуçалăх предприятийĕсенче кăçалхи 9 уйăхра кашни ĕнерен вăтамран 3661 килограмм сĕт сунă (иртнĕ çулхи çав тапхăрта – 3505), кашни чăхран 226 (234) çăмарта илнĕ.**

**Раççей Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – 2014 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре 354 пин пенсионер шутланнă, вĕсен йышĕ çулталăк пуçламăшĕнчипе танлаштарсан 0,7, пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 1,3 процент хăпарнă. Пенсин вăтам виçи 9810 тенкĕпе танлашнă е çулталăк пуçланнăранпа 8,9 процент пысăкланнă, пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен 1,8 хут ӳснĕ.**

**Ыран, ноябрĕн 29-мĕшĕнче, 10 сехетре, Шупашкарти «Николаевский» суту-илӳ комплексĕнче (Николаев урамĕ, 14А) купăста фестивалĕ иртет. Унта чĕрĕ купăстапа тăварланине тата ытти пахчаçимĕçе, элита вăрлăх туянма, конкурссемпе лотерея вылявне хутшăнма май пулĕ.**

**ПАЯН** **кун тăршшĕ 7 сехет те 32 минут. Уйăх тулса пырать.**

**Гурий кунĕ. Çак кун ир-ирех картишне вĕри кăмрăк илсе тухса юр çине пăрахнă – çакна усал вăйран хăтăлас тесе тунă. Юр ӳксен вăл çурчченех выртĕ тенĕ.**

**ЫРАН** **– Матвей кунĕнче çанталăк ăшăтакан. Çак кун сивĕ çил ахăрни – Хĕллехи Микулачченех (декабрĕн 19-мĕшĕччен) çил-тăман çавăрттарасса.**

**ВИÇМИНЕ** **– хĕл мĕнле пуласса сиснтерекен Кĕркури кунĕ: «Кĕркури мĕнле – хĕлĕ те çапла». Çырмари пăра сăнанă: вăл тĕксĕм пулни çитес çул тыр-пул лайăх пуласса.**



### Чечек паранки

Упрама хунă георгин, бегони, гладиолус паранкине уйăхра пĕр хут тĕрĕслесех тăмалла. Çĕрме пуçланă вырăна асăрхасан ăна пĕр шелсĕр касса илмелле. Каснă вырăна зеленкăпа сĕрмелле е вĕтетнĕ йывăç кăмрăкĕпе (аптекăра сутакан активациленĕ кăмрăк та юрать) сапмалла.

Кăвакарма пуçланине вара çур сехетлĕхе кирек епле фунгицид шĕвекне (калăпăр, Максим текеннине) ямалла.

Гладиолус папакĕ е тымарĕ вăхăт çитмесĕрех вăрансан ăна сивĕрех çĕре хумалла.

Çав тери хытса е çемçелсе кайнă чечек паранкине пăрахмалла: пурпĕрех шăтса тухмĕ, чечеке лармĕ.

Гладиолус холодильникра та питĕ лайăх упранать.

## ЯЛ-ЙЫШ — КИЛ — ХӲТЛĔХ — СЫВЛĂХ — ТĔПЕЛ

## ВУЛАКАН СĔНЕТ

### Çĕрулми, сухан, апельсин... хуппи

Виç-тăвата çул каялла сирĕн хаçатра çĕрулми хуппи хурлăхан тухăçне ӳстерме пулăшни çинчен вуласа пĕлнĕччĕ. Çавăнтанпа хĕл тăршшĕпех паранкă хуппине пухса пырса батарей çинче типĕтетĕп, пир хутаçра упратăп. Çуркунне ăна кашни хурлăхан тĕмĕ айне чавса чикетĕп. Çĕрулми хуппине тин вĕретнĕ шыва ярса лартсан та аван, сивĕнсе çитнĕ шывĕпе кайран ӳсен-тăрана шăвармалла.

Купăстапа хăяр лартнă чухне те паранкă хуппине удобрени вырăнне усă куратăп. Шывра шӳтернĕ хыççăн лайăх вĕтетсе калча лартмалли шăтăка хуратăп, çĕрпе вителĕп, унтан калчана лартатăп.

Çавăн пекех çулталăкĕпех суханпа апельсин хуппине те пухса пыратăп. Çĕрулми лартнă чухне вĕсене те кĕлпе хутăштарса пĕрле пăрахса пыратăп. Кайран паранкă шăтса тухса 5 см çӳллĕш ӳссен ăна пуçĕпех тăпрапа вителĕп. Тепĕр талăкран вĕсен пуçĕ каллех курăнать – каллех хупласа хуратăп. Çапла виçĕ хут тăватăп. Август вĕçĕнче-сентябрь пуçламăшĕнче питĕ хитре çĕрулми кăларса илетĕп.

**Людмила ИСАЕВА.**
**Вăрнар районĕ.**

## СĔНӲ-КАНАШ

• Нӳхрепри сывлăш питĕ типĕ пулсан унта шывпа йĕпетнĕ темиçе пусма татки çакмалла. Çав тери нӳрлĕ-тĕк йывăç кăмрăкĕ е тăвар хунă ешчĕк лартмалла. Чăннипех те пулăшать.

• Сурăх лайăх ӳстĕр, ĕрчевлĕ пултăр тесен вĕсене çулламалли тăвар хурса памалла. Çитĕнсе çитнĕ выльăха кунне 15-18 г тăвар кирлĕ пулсан, çамрăккисене – 10-12 г.

ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 28.11 | 29.11 | 30.11 | 1.12 | 2.12 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, ⁰C | 2-4 сехетре | –8 | –11 | –13 | –13 | –12 |
| | 14-16 сехетре | –6 | –7 | –10 | –8 | –8 |
| Юр çăвать | | – | – | – | ⁂ | ⁂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 766 | 767 | 761 | 755 | 753 |

## ЫЙТУ-ХУРАВ

### Вĕренене парăнтарасчĕ

**? Хисеплĕ редакци. Сирĕн хаçат урлă çакна ыйтса пĕлесшĕн. Вĕрене йывăç тĕмне мĕнле пĕтермелле-ши? Тем те туса пăхрăм, анчах пĕтмест.**

**Нумай çул каялла картишне асфальт сарнăччĕ, халĕ вăл ванса пырать. Ун вырăнне бетон сарасшăн. Асфальт çине бетон ларĕ-ши?**

**Елена НИКОЛАЕВА. Елчĕк районĕ, Аслă Пăла Тимеш.**

Вĕрене хунавне пĕтерме çăмăл мар. Темиçе меслет сĕнсе пăхатпăр.

1 Çуркунне вĕрене тункатине шăтарса унта йĕпе тăвар хумалла, полиэтиленпа лайăх витмелле. Кĕркунне тĕлне вăл хуралса ларĕ, хунавĕсем тухмĕç.

2 Тункатана темиçе вырăнтан шăтарса аммиак селитри (удобрени) ямалла. Юрçумăр тивесрен хупламалла. Вăл пĕтĕмпех сăрхăнса çитсен ăна чĕртсе ямалла. Пĕр кунта пулакан ĕç мар ку: кĕркунне удобренипе лайăх «апатлантарсан» çуркунне çунтармалла.

3 Пĕр витре шыва 1 кг тăвар тата раундап ямалла. Унпа шăтса тухнă хунавсене сирпĕтмелле, тункатана лачкам пуличченех йĕпетмелле.

Çакна шута илмелле: ӳсен-тăрана тĕппипе пĕтерме пулăшакан гербицид чылай: раундап, гликор, глисол, зеро, торнадо. Чи кирли – хăрушсăрлăха пăхăнса ĕçлени. Кĕркунне ӳсен-тăран хĕл ыйхине путма хатĕрленнĕрен вăл е ку меслетпе усă курни тухăççăр пулма пултарать. Çуркунне вара çанă тавăрсах ĕçлемелле.

Кивĕ асфальт çине тӳрех бетон сарма юрать. Вăл лайăххах тытăнтăр тесен малтан асфальт çине арматура çирĕплетсе хумалла. Бетон унталла-кунталла сарăлса каясран, паллах, лаптăк йĕри-тавра пулас бетон çӳллĕш хăмаран çапса курупка тумалла. Ăна шалçапа е арматурăпа çирĕплетмелле. Бетонĕ хытса çитсен 3-4 кунран вĕсене кăларса илмелле.

### Мĕнпе хупламалла?

**? Виноград тĕмне мĕнпе хупласан аван-ши?**

**Сергей НИКОНОВ. Йĕпреç районĕ.**

Пăчкă кĕрпи (опилка) лайăх, анчах вăл типĕ пулмалла. Çуркунне хайхи мулча вырăнне тĕмĕ çумĕнчех юлĕ. 1-2 çулти хунавсене пăчкă кĕрпипе лаппăшпех витмелле. Ытларах çул ӳснисене çĕр çумне тирпейлĕн хурса тимĕр çекĕлпе тыттармалла, унтан нимĕн те курăнмалла мар витмелле.

Çавăн пекех йывăççен çулçипе, çулса типĕтнĕ курăкпа, утăпа витме юрать. Пĕр çул ӳснĕ хунава сывлама шăтăксем хăварса тĕпне каснă пластмасса бутылкăпа хупласа çĕрпе витсен те аван.

### Пӳрнескеллĕ кишĕр

**? Пухса кĕртнĕ кишĕртен çурри ытларахăшĕ пӳрнескеллĕ те чĕчĕллĕ пулчĕ. Хам шутăмпа аванах пăхнă, вăхăтра шăварнă, çумкурăкран тасатнă. Сăлтавне пĕлесчĕ.**

**Тимофей ГАВРИЛОВ. Куславкка районĕ.**

Хытарăннă çĕр çинче кишĕр «майракаллă» ӳсет. Çавăнпа йăрана кĕркуннех хатĕрлеме тытăнмалла. Кĕркунне ăна 20 см кая мар чавмалла, çуркунне кишĕр акиччен 1,5-2 эрне маларах ăна тепĕр хут тарăн чавмалла. Тăмлă та йывăр çĕре кĕркунне хăйăр, лайăх çĕрсе çитнĕ пăчкă кĕрпи хывмалла, çуркунне – компост.

Çĕрсе çитмен тислĕк хывсан та кишĕр хитре мар çитĕнет. Кишĕр акиччен çĕре извеçлĕ материалпа кĕл хывма, çавăн пекех ӳсен-тăрана хлорлă калипе е кали тăварĕпе апатлантарма юрамасть.

Акнă хыççăн çĕр типсе кайсан тата шăтса тухсан пĕр уйăхччен çĕр типĕ тăрсан та кишĕр илемсĕр пулĕ. Çавăнпа кишĕр йăранне вăхăтра шăвармалла, кăпкалатмалла.

Ӳсен-тăран тымарне пĕчĕклех хурткăпшанкă (кишĕре тапăнакан шăна, упа нăрри) сиенлесен те кишĕр йӳплĕ çитĕнĕ.

ХЎТЛЁХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## «Ĕç ветеранĕ» ята илмелли стажа чакарнă

Чăваш Енре «Ĕç ветеранĕ» ята илмелли стажа 2,5 çул таран чакарнă. Çакăн çинчен калакан указа республика пуçлăхĕ Михаил Игнатьев виçĕм кун алă пусса çирĕплетнĕ. Ку йышăну 2015 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрĕ.

Çапла майпа «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçме **арçынсен 42 çул та 6 уйăх ĕçлеме тивĕ, хĕрарăмсен – 37 çул та 6 уйăх** (хальлĕхе вара 45 тата 40 çул). Паянхи куна 23 пин ытла пенсионерăн ĕç ветеранĕ ят пур.

«Ĕç ветеранĕ» ят пурри социаллă пулăшу илме май парать: уйăхсерен 1082 теккĕ тата çыхăну пулăшăвĕсен тӳлевĕн 50 процентне чухлĕ укçа компенсацийĕ.

## Тӳлевсĕр приватизаци – мартăн 1-мĕшĕччен

Раççей реестрĕн республикăри управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – хваттерсене тӳлевсĕр приватизацилемелли вăхăт вĕçленичче висĕ уйăх ытларах çеç юлчĕ. Муниципалитет çурт-йĕрне тӳлевсĕр майпа уйрăм çынсен харпăрлăхне куçарасси 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче вĕçленет, çавăнпа ку ĕçе халех татса пама тăрăшмалла.

Правасен пĕрлехи патшалăх реестрĕн кăтартăвĕсемпе килĕшӳллĕн республикăра кăçал кăна граждансем 4,5 пин хваттере приватизациленĕ. Пĕтĕмпе вара тӳлевсĕр приватизаци пуçланнăранпа Чăваш Енре уйрăм çынсен харпăрлăхне 162,5 пин ытла объект куçнă.

Чăваш Енре ытларах чухне хваттере икĕ е виçĕ çын çине çыртараççĕ.

Хваттер правине илни çинчен калакан патшалăх регистрацийĕн свидетельствине илни хваттере приватизацилес ĕç вĕçленнине пĕлтерет.

## Пенсие тухсан

**Пенсие тухма тата 10 çул ĕçлемелле. Патшалăхăн хушма укçа программине кĕрес шут пур. Унта хывнă укçа икĕ хут ӳснине хăçан тавăрса парĕç.**

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

Ватлăх çитнипе пенсие тухсан. Ку шута иртерех пенсие кăларни те кĕрет. Шутласа панă хыççăн уйăхри тӳлев пĕтĕмĕшле пенсин 5 процентĕнчен иртмесен мĕнпур сумăна харăсах тавăрса парĕç.

Аса илтеретпĕр: патшалăхăн хушма укçа программи 2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен хута кайнă. 14 çула çитнĕ кашни çын хăйĕн пулас пенси счечĕ çине хушма взнос хывма пултарнă: 10 çул таран çулталăкне 2 пин тенкĕрен пуçласа 12 пин тенкĕ таран. Патшалăх та взнос хываканăн счечĕ çине çавăн чухлех укçа куçарать. Çак программăна 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен кĕрсе юлмалла пулнă. Пилĕк çул хушшинче хушма укçа программине Раççейĕпе 16 млн çын хутшăннă, вăл шутран 203 пинĕшĕ пирĕн республикăран.

Программăна кĕрес текенсем нумай пулнине кура çак тапхăра кăçалхи çулталăк вĕçленичченех тăснă. Анчах пенси илсе тăракансем унта хутшăнма пултараймĕç. Çапла майпа 2014 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен патшалăхăн хушма укçа программине кĕрсе юлма май пур. Пирвайхи взноса вара 2015 çулхи январĕн 31-мĕшĕччен тӳлемелле.

### ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

## Алă шăнать

**Тăтăшах алă шăннипе нушаланатăп. Çăм алсиш тăхăнни те пулăшмасть.**

**Валерий ИВАНОВ. Муркаш районĕ, Çатракасси.**

Чылай чухне алă шăннипе юн çаврăнăшĕ пăсăлнă çынсем аптăраççĕ. Чĕре кирлĕ пек ĕçлемесен те, остеохондроз пулсан та шăнать вăл. Юн çаврăнăшĕпе веществосен çаврăнăшне лайăхлатма ытларах шыв ĕçмелле. Ку тĕлĕшпе улма-çырла сĕткенĕ, минерал шывĕ, курăксен шывĕ аван. Сахал хускалсан та юн тымарĕсем çывăраççĕ. Çавăнпа шăмшака тăтăшах хускатмалла, ӳт-пĕве тăварламан тумтир тăхăнмалла.

Алăсене эфир çăвĕпе сăтăрни юн çаврăнăшне лайăхлатать. Уйрăмах грейпфрут, розмарин çăвĕ аван. Анчах инсульт е инфаркт тӳссе ирттернисен, юн пусăмĕ ӳснипе, тытамак тытнипе, ӳт-тир чирĕпе аптракансен эфир çăвĕсемпе усă курма юрамасть.

Ал-ура сивĕ пулни организм уйрăмлăхĕ çеç пулсан апат-çимĕçе ăшăтакан çимĕçсем хушма тăрăшмалла. Ку вăл тĕрлĕ специ – имбĕр, горчица, хĕрен, кориандр, кинза.

Ал-ура кирек хăçан та шăнни варикоз чирĕпе, юн тымарĕсен аномалийĕпе çыхăнма пултарнă. Алăсем шăннипе пĕрлех ӳт туйăмлăхĕ чакса пынине, чĕре йĕркесĕр тапнине, чĕрнесем хуçăлнине, ӳт температури чакнине, ура туни ыратнине асăрхасан тухтăр патне каймалла.

Алă пӳрнисем шăнсан юн тымарĕсене çирĕплетмелле. Çакна тума ăшă пӳлĕмре алла 3-5 минутлăха ăшă шыв янă савăта чикмелле. Унтан сивĕ пӳлĕме кусса алла 7-10 минутлăха каллех ăшă шыва чикмелле. Çак упражнение кунне 3 хут пĕр уйăх таран тумалла. Алăсене çил арманĕ пек çавăрттарни юна пӳрне вĕçне пыма май парать.

Рационра тимĕрпе пуян çимĕç пулни аван: кайăк-кĕшĕк ашĕ, пулă, çуллă мар аш, ясмăк, ешĕл çимĕç, апельсин сĕткенĕ.

Çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те организма Е витамин кирлĕ, вăл юн тымарĕсене сарать. С витамин вара юн тымарĕсене çирĕплетме пулăшать.

Ларса ĕçлени уйрăмах сиенлĕ. Кашни 15 минутра выртăнтан тăрса туртăнмалла, ал-урана хускатмалла. Ӳт-пĕве çемçетме 3 минут вăхăт уйăрсан та ĕçлес пултарулăх ӳсет, мĕншĕн тесен пуç мимине юн пыраслӑх лайăхланать.

Халăх медицини мĕн сĕнет-ха?

Кофе, какао, газлă минерал шывĕ, эрех-сăра ĕçесрен асăрханмалла.

Çулла çаран утма тăрăшмалла. Хăйăр, ирхи сывлăм, курăк çийĕн çара уран утнине нимĕн те çитмĕ.

Эрнере пĕр хут мунча кĕмелле.

Ал-урана сивĕ тата вĕри шыва чиксе кăлармалла.

Алăсене массаж тумалла.

Чечек пылне чĕлхе айне 1 чей кашăкĕ хурса пĕтĕмпех ирĕлсе пĕтиччен тытмалла. Çапла кунне 6-8 хут. Сиплев тапхăрĕ – 2 уйăх.

Табак туртакансен, паллах, çак сиенлĕ йăлана пăрахăçламалла.

### КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?




**Ӳслĕкрен.** Çĕрле каçса кайса ӳсĕрттерме пуçласран: 1 стакан сĕте 1 кашăк шалфей курăкĕ ярса вĕреме кĕртмелле, 40 минут тăрăлтарса лартмалла, сăрăхтармалла. Кунсерен çывăрас умĕн вĕрилле пĕрер стакан ĕçмелле.

Типĕ ӳслĕкрен ыхра шăлне теркăпа хырса марля çине хумалла, каçхине ăна ура тĕпне хурса çăм нуски тăхăнмалла.

**Шĕпĕнрен.** Марганцовка пĕрчине типĕллех шĕпĕн çине хурса пластырьпе çирĕплетмелле, каçлăха хăвармалла. Çапла кашни каç тумалла. Вăхăт иртнĕçемĕн шĕпĕн хуралса яланлăхах çухалĕ.

**Астма аптратсан.** Пыл, услам çу, салă, сахăр хутăштарса йăваш çулăм çине лартмалла, анчах вĕреме кĕртмелле мар. Усă курас умĕн хутăша спирт, кагор, минерал шывĕ тата апат соди хушмалла. Пĕр порци хатĕрлеме 1 кашăк спирт, пĕрер чей кашăкĕ пыл, сахăр, услам çу, 50-шар мл кагор тата минерал шывĕ, 2 чей кашăкĕ салă, 0,5 чей кашăкĕ апат соди илмелле. Пĕр уйăх таран кунне 3 хут, апат умĕн, ăшăлла ĕçмелле. Çак хутăша кашнинчех çĕнĕрен хатĕрлемелле.

**Пит çинчи шатрашкасене (угри) пĕтерме.** Пите сырлан (облепиха) сĕткенĕпе сĕрмелле. Çур сехетрен ăшă шывпа çуса ямалла.

### ШУТА ИЛМЕ

## Пит нумай ларатпăр

Ученăйсем çирĕплетнĕ тăрăх – кун тăршшĕне ларса ирттерекенĕн вар хытас, кутана тухас хăрушлăх пысăк, çурăм шăммипе çыхăннă йывăрлăхсем те пулаççĕ. Ларса ĕçлекенсем хушшинче диабетпа, чĕрепе, юн пусăмĕ ӳснипе тата шăк тытманнипе чирлисем ытларах тĕл пулаççĕ.

Хальхи вăхăтра çамрăксем вăхăта ĕçре те, килте те кресло çинче е компьютер умĕнче ирттереççĕ. Ĕçе машинăпа ларса каяççĕ. Каялла та ларса килеççĕ. Кунĕпе ларни питĕ сиенлĕ. Апла мĕн тумалла-ха?

Кунне 10 пин утăм таран утмалла. Хамăра нумай утнă пек туятпăр, çав хушăрах виçсен 2-3 пин утăмран та иртмест. Автобус-троллейбус çине ларассишĕн ăшталанар мар, май пулсан – çуранах утар. Лифтпа та усă курма кирлĕ мар.

Ларса ĕçлемелле пулсан кашни 10-15 минутран тăрса хускалса илмелле. Пӳлĕм тăрăх утни те, хул-çурăма кăштах авкалани те усăллă.

Кăштах тăрса ĕçлеме те юрать.

Пилĕк ыратать-и? Апла халех тăрса ĕçлеме, шăм-шака хускатма пуçлар.

### СЫВЛĂХ САЛАЧĔ

Тăварланă купăста çине турамсене каснă панулми, туранă симĕс суханпа петрушка е укроп, консервланă симĕс пăрса, пĕр ывăç шур çырли (клюква), тип çу ярса пăтратмалла.

### КИРЛĔ ПУЛĔ

## Пӳрене тасатма

Пӳре ырă-сывă пултăр тесен кунсерен çак çимĕçсенчен пĕрне те пулин çимелле.

**Арбуз** – шăк хăвалакан чи лайăх çимĕç. Унăн сĕткенĕ шăка «йӳçеклеме» памасть.

**Кавăн** витаминсемпе, микроэлементсемпе тата пектинпа пуян, чул пуласран пулăшать, пӳрепе шăк хăмпине тасатать. Чĕрĕ кавăн тĕшши тата унран хатĕрленĕ настой – шăк хăвалать.

**Виноградра** пӳрене лайăх ĕçлеме кирлĕ кали нумай. Фосфорпа кремни кислоти пурри чул пухăнасран хӳтĕлет.

**Шур çырлинче** (клюква) флавоноидсем пурри шăк тытăмне тасатма, шыçă чирĕсемпе кĕрешме пулăшать.

**Хăяр** организмран ытлашши шăк йӳçекне кăларма, чул пуласран сыхланма пулăшать. Вăл калипе пуян, пӳре шыççинчен аван.

**Пулă**, уйрăмах тинĕсре ишни, организма микроэлементсемпе, омега-3 йышши çу кислотисемпе, витаминсемпе тата белокпа пуянлатать. Кусем шăпах пӳре ĕçне лайăх витĕм кӳрекенсем.

**Сельдерей** пӳрене тасатма, чулсене ирĕлтерме пулăшать. Пӳрепе аптрасан апата тăвар вырăнне типĕтнĕ сельдерее порошок пек туса хушмалла.

**Хура çырла** (черника) бактерисене пĕтернипе, пӳререн хăйăр кăларма пултарнипе паллă. Çырларан тунă варени, кĕсел, морс тутлă пулнипе пĕрлех чаплă эмел те.

Пӳрене йĕркеллĕ ĕçлеме тĕрĕс апатланни çеç çителĕксĕр. Эрех-сăра, сахăрпа тăвар, пăсăлнă тата белоклă апат-çимĕç çиесрен асăрханасчĕ.

### САЛАМЛАТПĂР!



Юратнă аннене, кукамая – Çĕмĕрле районĕнчи Кĕçĕн Тăван ялĕнче пурăнакан **Галина Михайловна НОГАЕВĂНА** – 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, савăнăç сунатпăр.



Эсĕ пурри – пирĕн пуянлăх,  
Эсĕ пурри – кил-çурт тĕрекĕ,  
Эсĕ пурри – чĕре ăшши.  
Ырлăх сунатпăр кăмăлтан,  
Эсĕ вĕт хаклă ылтăнран.

**Хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе мăнукĕсен ачисем.**

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куричен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*


### РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТĂП ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором.Т.:44-20-97, 89033582097.

**659. ОКНА и ПОТОЛКИ.** Немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Д-ка, замер бесплатно. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

# «Вулас туртăм ан çухалтăр»


Светлана Матанова вулакансемпе

Сергей Журавлев сăнÿкерчĕкĕсем

## Çулла – урама, хĕлле – хутман çурта

Пысăк чĕреллĕ çын. Хăйĕн ĕçне чунтан парăннă çутă çын. Калама çук çирĕп шăнăрлă хĕрарăм теес килет Светлана Матанова пирки. 28 çул ертсе пырать вăл Куславкка районĕнчи Кунер библиотекине. Мĕн кăна тÿссе ирттермен-ши çак хушăра? 1996 çултан пуçласа укçа çуккипе библиотекăна хутса ăшăтма чарнă. Çак тапхăр 9 çула тăсăлнă. Кĕнекесене нÿрĕкрен сыхласа çулласерен урама, хĕвел тÿрремĕн лекмен вырăна илсе тухса типĕтнĕ вăл. Çурпа кĕр кунĕсенче маччаран тумлакан шывран хÿтĕлесе стеллажсене хупланă. Анчах темле йывăр пулсан та кружоксем йĕркелеме, тĕлпулусем ирттерме пăрахман. «Çилçунат» пĕрлешÿпе «Çемçе теттесен» кружокĕ ĕçленĕ вăхăтра вулав çурчĕ кĕрлесе çеç тăнă. Кĕçĕн çулти ачисем алă çине тетте тăхăнтартса юмахсем лартнине, аслăраххисем çунатланса хăйсен сăввисене вуланине ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ чунтан савăнса пăхса ларнă. Библиотекăран çын татăлман. Ку çеç-и? Район, республика шайĕнчи конкурссене хутшăнса тăтăшах малти вырăнсене çĕнсе илнĕ, илет те. Çак кунсенче вăл каллех XXI ĕмĕрти чи лайăх библиотекăсен смотрĕн призерĕ пулса тăчĕ. «Ăс-тăн еткерлĕхĕ» программăпа культурăпа йăлайĕркене епле сыхласа хăварса аталантармаллине кăтартса пачĕ. Ку халĕ-ха. Маларах вара...

## 500-мĕш тĕслĕх библиотека

Ялсенче тĕслĕх библиотекăсем тăвасси çинчен калакан указа парне вырăннех йышăннă Светлана Александровна. Çăлăнса юлас шанăç çуралнă. 70 çулхи юбилейне библиотека хăйне евĕр кĕтсе илнĕ: çурта тĕпрен юсаса çĕнетес ĕç пуçланнă. Çак хушăра клуб ĕçченĕсем мĕн таран тусан çăтнине, миçе тонна кĕнеке йăтнине никам та калаймĕ. 2007 çулта республика кунĕнче кунта Чăваш Енри 500-мĕш тĕслĕх библиотеки уçăлнă.

Тинех Светлана Матановăн тахçанхи шухăш-ĕмĕтне пурнăça кĕртме майсем уçăлнă. Интернетпа усă курма вĕренес текенсемшĕн вăл ятарлă кружок йĕркелет. Проект çине проект хатĕрлет: «Хавхаланса вулар», «Çĕр еткерлĕхĕ», «Çĕнтерĕве шанса фронтран янă çырусем», «Вăрçă çулĕсенчи ачасем», «Выляса вулама вĕренер». Вĕсем пурте вăйра. Писательсем, журналистсем, артистсем килсе тăраççĕ. Пур енĕпе те маттур библиотекарь ĕçĕпе паллашма урăх регионсенчен те туртăнаççĕ. Тутарстан, Рязань, Владимир, Ярославль, Архангельск тата ытти облаçсенчи хăнасене йышăннă вăл.

## Ырашпулăхри вулавăш

Библиотекăра краеведени залĕ пур. Çирĕм çул хушшинче ача сăпкинчен пуçласа хултăрчă, кĕнчелеççи таранах пухнă. Иртнĕ çул Матанова грантпа çĕнсе илнĕ 100 пин тенкĕн пысăк пайне шăпах çак залри ăшă пăрăхĕсене улăштарма янă. Урамрипе пĕр тан температура пулнăран кунта кĕтессем пăрланса юхса ларнă. Халĕ пĕтĕмпех йĕркеллĕ.

Хăй вăхăтĕнче Кунертен 4 çухрăмра вырнаçнă Ырашпулăхри библиотекăна хупас вĕçнех çитнĕ. Светлана Александровна çак пĕчĕкçĕ вулавăш чăннипех те кирлине ĕнентерме пултарнипе çеç сыхланса юлнă вăл. Çавăн чухне, 8-9 çул каялла, ăшталанса чупман пулсан хайхи çурт, тен, тахçанах юрăхсăра тухатчĕ-и? Халĕ вара эрнере икĕ кун унăн алăкĕ уçăлса хупăнать. Ял çыннисем библиотекарь килессе кĕтсех тăраççĕ.

## Кунта пурте пĕр тан

Кĕнеке ĕмĕртен хаклă парне шутланнă. Халĕ те çаплах тесе шухăшлать вулавăш ĕçченĕ: «Укçа пулмасан кĕнеке лавккинчен нимсĕрех тухатăн. Библиотекăра вара пурте пĕр тан: укçалли те, укçасăрри те, ватти те, вĕтти те. Хăшĕ килĕшет – çавна суйла. Çĕннисем хушăнса тăччăр кăна. Кĕнеке фондне пуянлатассишĕн вара хамăр енчен мĕн тума пултарнине йăлтах тăватпăр. Пур конкурса та хутшăнма тăрăшатпăр. Дипломпа пĕрле 3-4 кĕнеке çĕнсе илни те лайăх-çке. Пĕтĕмпех вулакансем валли, фонда пуянлатма».

## Чун ыйтнипе

Кунер ял тăрăхне кĕрекен 9 ялта 1000 ытла çын пурăнать. Библиотека каталогĕнче вара 800 ытла çын шутланса тăрать. Çулла çын уйрăмах нумай кунта. Хуларан тăванĕсем патне килекен ачасем шкул программипе ыйтакан кĕнекесене çыххисыххипе йăтаççĕ.

Кĕçĕн классенче вĕренекенсемшĕн те хăтлă вырăн ку. Ларса вулама кăна мар, выляма та вырăн пур вĕсем валли.

Çу кунĕсенче шкул ачисем библиотекăн балконне тухма юратаççĕ. Çапла, балкон та пур кунта. 15 метр тăршшĕ. Ăна та, усăллă та юрăхлă вырăн тăвассишĕн, кантăкпа алăк ларттарассишĕн кам патне кăна çитмен-ши?

Хăй тунă ĕçсем пирки калама юратмасть Светлана Александровна. Чун хушнипе, чун ыйтнипе ĕçленине çеç палăртать.

## Мĕнпур ыйтупа

Ачана садике вырнаçтарма мĕнле документсем кирлĕ? Çĕр пайне сутас ĕçе мĕнрен пуçăнмалла? Тухтăр патне электрон черете епле çырăнмалла? Темле ыйтупа та килеççĕ библиотекăна. Пурне те йышăнать, ăнлантарать библиотекарь. Кирлĕ хутсене хатĕрлеме пулăшать. Кăмăлсăр тухса каякан пулман ун патĕнчен. Çапла, халăха патшалăхпа муниципалитет пулăшăвĕ парассипе те ĕçлеççĕ кунта. «Пĕр чÿрече» мелĕ пурри çынсене унта-кунта чупмасăрах мĕнпур документа вырăнта тума май парать.

Интернет ĕмĕрĕнче пурăнни, кĕнекепе хаçат-журнала электронли çĕнсе пыни çинчен нумай калаçаççĕ хальхи вăхăтра. «Вăл та, ку та пултăр, – тет Светлана Александровна. – Анчах кĕнекене е хаçат-журнала кирек хăçан та, кирек епле лару-тăрура та алла тытма, кирлĕ пулсан кăранташпа йĕрлеме е ахаль çеç уçса хупма, шăршине туйма пулать. Вăл – чунлă. Чунли – ĕмĕре. Чи кирли литературăпа кăсăкланасси, вулас туртăм ан çухалтăр. Унсăрăн нимĕнле модернизаци те çăлса хăвараймĕ».

Ĕмĕрĕпех ырă ĕмĕтпе пурăнса ырă ĕçсем тăвакан библиотекарь шухăшĕсене çĕнетсех тăрать. Халăха библиотекăна илĕртес тесен вĕçĕмсĕр çĕннине шухăшласа кăлармаллине, пĕр вырăнта лармалла маррине питĕ лайăх ăнланать вăл. Çавăнпах пĕр вăхăтрах библиотекарь те, учитель те, психолог та, пуçаруçă та вăл. Хĕрарăмсен канашĕн председателĕн лавне те чăхăмламасăрах туртать. Мĕнпе тытăнса тăрать паянхи культура тесен тÿрех Светлана Матанова пек çынсем пуррипе тенĕ пулăттăм. Чăн сăмахăн суйи çук.

## Шăрçаланаççĕ эрешсем

«Пирĕн Танечка» тесе чĕнеççĕ ăна Ырашпулăхсем. Хисеплесе, юратса. Кашни кĕçнерникунпа эрнекун вăл çитессе кĕтсе тăраççĕ. Лашманова, Терентьева, Коростылева тата ыттисем вăл мĕнле кĕнеке е хаçат-журнал йăтса килнипе кăсăклансах тăраççĕ. Кунерти вулавăшра çур ставкăпа шутланса тăракан Татьяна Дерюжина эрнере икĕ кун Ырашпулăхри библиотекăна çитсе çĕнĕ кĕнекесемпе, хаçат-журналпа паллаштарать.

Ĕç укçи 3 пин тенкĕ те тухмасть унăн, анчах библиотекăран каяс шут пулман. Килĕштернипе ĕçлет кунта. Чун туртнипе. «Пурте укçа тума тухса каяймастпăр вĕт, – тет вăл. – Чиперех пурăнатпăр. Вырăнхчĕрлĕх ÿстерсе сутатпăр. Ачасене аслă шкултан вĕрентсе кăлармалла. Упăшка ĕçлет – çав лайăх».

Алли-ури ылтăн теççĕ Татьяна Ивановна пеккисене. Хăйне валли пальто та çыхса тăхăнма пултарать вăл. Тĕрĕ тĕрлет, вĕт шăрçапа тĕрлĕ япала ăсталать. Шăрçапа тĕрленĕ ĕçĕсене чĕрринчен уйăрса илме те йывăр. Калăсăн, сирень çеçкипе çырла тĕмне тин çеç урамран татса кĕрсе куршака хунă. Тĕмеске çине вĕçсе ÿкнĕ вăрăран вара шерепеллĕ шурă хурăн ÿссе ларнă тейĕн. Кашни шăрçа пĕрчин хăйĕн вырăнĕ. Эрешсен тĕсĕпе илемĕ сивĕ çанталăкра пушшех тыткăнлать. Куç умне ырă та ăшă çу кунĕсене кăларса тăратать. Чунпа юратса тунă ĕç çапла пулать ахăртнех. Кунер библиотекинче кружок уçнăскер хăй пĕлнине тÿлевсĕрех ыттисене вĕрентет. Кĕçĕн класра вĕренекен ачасем уйрăмах юратса çÿреççĕ унăн


Татьяна Дерюжина

урокĕсене. Республикăри библиотекарьсем хушшинче кăçал Татьяна Дерюжина хăйĕн алĕç пултарулăхĕпе пĕрремĕш вырăна тухнă.

– Кăмăл çеç пултăр, уттине вĕренме пулĕ, – тет маттур хĕрарăм. – Пăралукпа шăрçине тупма пулать. Кашни кĕçнерникун кунта пасар. Эпĕ хама кирлĕ япаласене аслă ывăла хуларан илсе килтеретĕп. Маларах кăшт мăкăртататчĕ паллах. Хĕрача пек шăрçа шыраса çÿремелле-и тесе. Мĕн тăвас тен, ывăлсем кăна та манăн. Халĕ хăнăхса çитрĕ – ыйтнине пĕр сăмахсăрах пурнăçлать. Ара, пралук кунта 120 тенкĕ пулсан, Шупашкарта – 90 тенкĕ, шăрçа та унта 2-3 хут йÿнĕрех.

Телевизор умĕнче нихăçан та ахаль лармасть вăл. Аллинче яланах ĕç. Хăй калашле, чакаланса ларсах хÿхĕмрен те хÿхĕм япаласем шăрçаланаççĕ. Парне пама та намăс мар вĕсене. Ÿкерчĕксене интернетран илнине, кĕнеке-журналта шыранине пĕлтерет Татьяна Ивановна. «Хĕллехи каçсем вăрăм, ÿркенмесен тем тума та вăхăт çитет».

**Елена НИКОЛАЕВА.**

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Купăста тăварланăччĕ

**? Купăстана алюмини савăт-сапара тăварлама юрамасть тенине вуласа пĕлтĕм. Мĕншĕн юраманнине ăнлантарсамăр, тархасшăн. Эпир шăпах виçĕ витре кĕрекен алюмини савăтпа купăста йÿçĕтме лартнăччĕ. Çиме юрăхсăра тухрĕши вара?**

**Тимофей ГРИГОРЬЕВ.**
**Тăвай районĕ, Ямбулат ялĕ.**

Алюмини савăта люмини оксичĕпе витеççĕ, вăл вара кислотапа тата сĕлтĕпе çыхăнăва кĕрет, сывлăхшăн çакă сиенлĕ. Паллах, алюмини савăтра купăста йÿçĕтме юрать. Анчах çимĕçĕн кастрюльпе реакцие кĕмелле мар, çапла ан пултăр тесен шала лаппăшĕпех полиэтилен хутаç сармалла. Апла сирĕн шăпах çак меслетпе усă курма май пур.

Купăста йÿçĕтмелли чи лайăх савăт вăл – йывăç каткапа пичке. Çавăн пекех кĕленче савăт-сапа. Сăмах май, пластмасса витре те наркăмăшлă япаласем кăларать. Апат-çимĕç тытма юрăхлă ятарлă пластмасса савăтпа усă курсан çеç, анчах унта та çимĕçе нумайлăха хăварма юрамасть.

## УСĂ КУРМА

• Пичкепе е каткапа йÿçĕтнĕ хăяра кăвакăш ересрен нихăçан та çĕр çине лартмалла мар. Савăт айне чул, кирпĕч е вут пуленки те пулин хумалла. Кăвакăш пичкери çимĕçе ан куçтăр тесен вăхăт-вăхăтăн çимĕçе пусарса тăракан йывăр япалана шывпа çуса илмелле. Пичкене вара 5-10 кашăк чухлĕ типĕ горчица тултарнă çитсăран çĕленĕ пĕчĕкçĕ хутаç чикмелле.

